Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчене тухать

18 (7979) № ✻ Юн кун, 2012 çулхи пуш (март) уйăхĕн 7-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Çамрăк, пултаруллă, хастар

**ЧР Пуçлăхĕн стипендиачĕсем**



*Свердловск облаçĕнче çуралса ӳснĕ Юлия Владимировна Купцалова акă пилĕк çул ĕнтĕ «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики» акционерсен уçă пĕрлешĕвĕнче вăй хурать. Ĕçри должноç вара унран пысăк яваплăх ыйтать: Юлия Владимировна – фабрика директорĕн право тĕлĕшпе тата кадрсен ĕçĕпе пулăшаканĕ.*

*Шупашкарта институтран вĕренсе тухнă хыççăн (сăмах май Юлия Владимировна икĕ аслă пĕлӳ илнĕ) шăпа ăна чăх-чĕп фабрикине илсе çитерет. Хула хĕрне ку ĕç хăратмасть. «Ĕç условийĕсем, ĕçе çӳреме меллĕ майсем – транспортпа çӳресси, пурăнмалли вырăн – туса парсан ялсене çамрăксем ĕçлеме килеççех», – пĕлтерет вăл хăйĕн шухăшне.*

*Кирек хăш сферăра та ăста специалистсем кирлĕ. Çавăнпа та тепĕр чухне ăслă-тăнлă çамрăк специалиста ĕçе илни нумай çул хушши ĕçлекене тепĕр хут вĕрентнинчен лайăхраххине пытармасть Юлия Владимировна. Ĕç паракансем аслă шкулсемпе тачăрах çыхăнса ĕçленин пĕлтерĕшĕ пысăккине калать.*

*Хастар специалистăн вара фабрикăри ĕççĕр пуçне ответлă обществăлла ĕç те пур. Фабрика директорĕ Н. Ванеркин ачасен прависене хӳтĕлекен районти уполномоченнăйĕ пулнă май Юлия Владимировна – уполномоченнăйăн пулăшаканĕ те. Хăйĕн пĕлĕвне тăтăшах ӳстерет тăрăшуллă специалист, ĕçре ăнăçуллă ĕçлет. Унăн пултарулăхне иртнĕ çул вĕçĕнче тивĕçлĕ хак панĕç. Пĕлтĕрхи кăтартусемпе Юлия Владимировна ЧР Пуçлăхĕн стипендиачĕ пулса тăчĕ.*

**Н. НИКОЛАЕВА** сăн ӳкерчĕкĕ.

**РФ Президенчĕн суйлавĕ**

## Раççей Президенчĕ – Владимир Путин

РФ тĕп суйлав комиссийĕн ертӳçи Владимир Чуров пĕлтернĕ тăрăх, çĕр-шыв Президенчĕн суйлавне хутшăннисен бюллетенĕсене шутласа пĕтернĕпе пĕрех ĕнтĕ. Ытларах сасă пухса суйлавра Владимир Путин çĕнтерни никамшăн та иккĕленӳллĕ мар. Президент суйлассипе иккĕмĕш тур пулмасть.

Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен суйлав комиссийĕсем – 83.

Суйлавçăсен списокне кĕртнĕ суйлавçăсем – 109863118.

Президента суйлама тăратнă кандидатсем суйлавçăсен сассине пухнă:

| | | |
|---|---|---|
| Жириновский В.В. | – | 4457785 (6,22%) |
| Зюганов Г.А. | – | 12316976 (17,18%) |
| Миронов С.М. | – | 2763463 (3,86%) |
| Прохоров М.Д. | – | 5718433 (7,98%) |
| Путин В.В. | – | 45591642 (63,60%) |

### Чăваш Ен çакăн пек сасăларĕ

| | | |
|---|---|---|
| Суйлавçăсен шучĕ | – | 954572 |
| Суйлава хутшăннă | – | 73,65% |
| **Сасăланă:** | | |
| В.В. Жириновскийшăн | – | 5,65% |
| Г.А. Зюгановшăн | – | 20,58% |
| С.М. Мироновшăн | – | 4,44% |
| М.Д. Прохоровшăн | – | 5,52% |
| В.В. Путиншăн | – | 62,32% |

### Пĕр мандатлă 9-мĕш Катькас суйлав округĕпе депутатсен районти Пухăвĕн депутатне суйланин итогĕсем

| | | |
|---|---|---|
| Суйлавçăсен хисепĕ | – | 1118 |
| Суйлава хутшăннă | – | 882 (78,9 %) |
| Юрăхсăр бюллетеньсем | – | 54 (6,1 %) |
| **Кандидатсем суйлавçăсен сассине пухнă:** | | |
| Сергеева Любовь Петровна | – | 399 (45,2 %) |
| Мочалов Эдуард Валерьевич | – | 208 (23,6%) |
| Крючков Василий Александрович | – | 128 (14,5 %) |
| Ямангеев Владимир Владиславович | – | 93 (10,5%) |

## Муркашсем – малашлăхшăн

***Раççей Президенчĕн 2012 çулхи мартăн 4-мĕшĕнчи суйлавĕн итогĕсем пирки Муркаш территори суйлав комиссийĕ пĕлтернинчен***

Территорири участоксенчи суйлав комиссийĕсем – 52.

Суйлавçăсен списокĕсене кĕртнĕ суйлавçăсен хисепĕ – 24585.

Участоксенчи суйлав комиссийĕсем суйлав бюллетенĕсем илнĕ – 26490.

Суйлав кунĕччен сасăланă суйлавçăсене панă суйлав бюллетенĕсен хисепĕ – 0.

Суйлав кунĕнче участоксенчи суйлав комиссийĕсем суйлавçăсене сасăламалли пӳлĕмре суйлав бюллетенĕсем панă – 18347.

Суйлав участокĕсем сасăламалли пӳлĕм тулашĕнче сасăлакан суйлавçăсене суйлав бюллетенĕсем панă – 2647.

Усă курман суйлав бюллетенĕсем – 5496.

Сасăламалли илсе çӳремелли ещĕксенче суйлав бюллетенĕсем пулнă – 2647.

Сасăламалли стационарлă ещĕксенче суйлав бюллетенĕсем пулнă – 18345.

Юрăхсăр тесе йышăннă суйлав бюллетенĕсем – 273.

Юрăхлă тесе йышăннă суйлав бюллетенĕсем – 20719.

Участоксенчи суйлав комиссийĕсем суйлав кунĕччен участоксенче открепительнăй удостоверенисем панă – 2120.

Открепительнăй удостоверенисемпе сасăланă – 568.

**Регистрациленĕ кандидатсем сасă пухнă:**

ЖИРИНОВСКИЙ Владимир Вольфович – 1421 (6,77%)

ЗЮГАНОВ Геннадий Андреевич – 3997 (19,04%)

МИРОНОВ Сергей Михайлович – 707 (3,37%)

ПРОХОРОВ Михаил Дмитриевич – 785 (3,74%)

ПУТИН Владимир Владимирович – 13809 (65,78%)

Сасăлава хутшăннă суйлавçăсен хисепĕ – 20992 (85,39%).

## «Поддержка» – надежная опора для селян

ОАО Государственная страховая компания «Поддержка» (далее – ГСК «Поддержка») является успешной и динамично развивающейся региональной страховой компанией. В ее уставном капитале доля Правительства Чувашской Республики составляет 34,36 %, что свидетельствует о признании эффективности и целесообразности деятельности компании по развитию страхового рынка в республике.

Страховую деятельность ГСК «Поддержка» осуществляет с 1992 года. Изначально она создавалась для работы на селе, и это направление остается приоритетным до настоящего времени. Компания предоставляет физическим и юридическим лицам широкий спектр страховых услуг, обеспечивает необходимое страховое покрытие по приемлемой цене, включая малообеспеченные слои населения, а также высокий уровень обслуживания страхователей. Все решения, касающиеся взаимодействия компании со страхователями, в том числе и такие важные для них вопросы как тарифы и урегулирование убытков, принимаются в компании оперативно.

(Окончание на 2 стр.)

**Çырăнтару – 2012**

**«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата кăçалхи иккĕмĕш çур çулта илсе тăма апрелĕн 1-мĕшĕччен унчченхи хакпа çырăнтараççĕ. Хакĕ ултă уйăха – 191 тенкĕ те 70 пус.**

**Ыран – Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ**

**ЮРАТНĂ ХĔРАРĂМСЕМ!**

Сире пĕтĕм чун-чĕререн питĕ чаплă уявпа – Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ ячĕпе саламлатăп!

Сирĕн çепĕç куллăр ăшшипе, савăнăçлă кăмăл-туйăмпа тата çĕнелӳпе тулса пуянланнă çак илемлĕ уява эпир пурте чăн-чăн çуркунне палли пек йышăнатпăр. Çак вăхăтра çут çанталăк хĕл ыйхинчен вăранса чĕрĕлме тытăнать, чунра çĕнĕ ĕмĕт-тĕллев çуралать.

Иксĕлми юратупа илеме, тарăн ăспа ыр кăмăллăха, ăш пиллĕхпе чăтăмлăха сăнарлакансем, эсир пурнăçа савăнăçлăрах тата çураçуллăрах тăватăр. Хăвăр чунтан савакан çыннăрсене ачашлăхпа ăшă туйăм парнеленĕ май, вĕсене пурнăçри йывăр самантсенче тĕрлĕ пăтăрмахсемпе инкексенчен сыхлатăр, килти хăтлăха шанчăклăн упратăр. Сирĕн юратăвăрпа тăрăшулăхăр пире, арçынсене, вăйлăрах пулма хистеççĕ, пултаруллă ĕçлеме тата ырă ĕçсем тума хавхалантараççĕ.

Эпир Сире хамăра ăнланнăшăн тата ырă кăмăллă пулнăшăн, çемье вучахне упрама пĕлнĕшĕн, ачасене çивĕч ăс-тăнлă та пултаруллă туса пăхса çитĕнтернĕшĕн тата хăвăр çав хушăрах ĕçре, общество пурнăçĕнче пысăк çитĕнӳсем тума пултарнăшăн чĕререн тав тăватпăр.

Хаклă аннесемпе асанне-кукамайсем, мăшăрсемпе хĕрсем, аппасемпе йăмăксем тата тантăшсем, пирĕн пурнăça пархатар кӳнĕшĕн тата ăна телейлĕ тума пулăшнăшăн сирĕн умăрта эпир пуç таятпăр. Ан тив, сирĕн чунăрта яланах çуркунне чечеклентĕр, çемйĕрсенче юратупа килĕшӳлĕх хуçаланччăр, чи çутă ĕмĕтĕрсем пурнăçланччăр! Çирĕп сывлăх тата ырлăхпа телей сире!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М. ИГНАТЬЕВ.**

**ХИСЕПЛĔ ТЕ ХАКЛĂ ХĔРАРĂМСЕМ!**

Сире çуркуннехи чи пĕрремĕш уявпа – Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Çуркунне пĕтĕм тĕнчене чĕрĕлĕх, илем парнеленĕ пекех çĕр çинчи мĕн пур ырлăхпа илем, пирĕн паянхи кунпа пуласлăх пĕтĕмпех сирĕнпе çыхăннă, хисеплĕ аннесемпе асаннесем, юратнă мăшăрсем, аппасемпе йăмăксем. Эсир ачăрсене кун-çул парнелесе телей пиллетĕр, вĕсем тĕрĕс воспитани илсе пурнăç çулĕ çине тăччăр тесе хăвăртан килнине йăлт тăватăр. Мĕн ĕмĕр тăршшĕпех эсир ачăрсемшĕн çунатăр, тăрăшатăр, вĕсен хуйхи-савнăçĕпе пурăнатăр. Эсир пурри – хăй кăна мĕнле пысăк телей.

Хисеплĕ те юратнă хĕрарăмсем, эсир çемье, килçурт ăшшине упратăр. Тавах сире пире вăй-хал паракан ырă кăмăлăрпа ăшă куллăршăн, иксĕлми çепĕçлĕхĕрпе ачашлăхăршăн, ăнланнăшăн, каçарнăшăн. Çывăх çыннăрсен хуйхи-суйхине хăвăрăн чĕре витĕр кăларса, вĕсене йывăрлăхсене çĕнтерме пулăшнăшăн.

Нимпе танлаштарайми иксĕлми вăй-хал тапса тăрать тата сирĕнте. Кирек ăçта ĕçлесен те пултарулăхпа палăрса тăратăр, ӳсĕм хыççăн ӳсĕм тăватăр. Район аталанăвĕшĕн яваплăха туйса вăй хуратăр. Тавах сире çакăншăн.

Сире пурне те çирĕп сывлăх, телейлĕ те вăрăм кунçул сунатăп. Сирĕн сăн-питĕртен нихăçан та йăл кулă ан çухалтăр. Ĕмĕр тăршшĕпех ачăрсемпе савăнса пурăнмалла пултăр, çемьере килĕшӳпе юрату хуçаланччăр.

**Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. ТИМОФЕЕВ.**

**Райадминистрацире**

## Хисеп грамотипе наградăлану

Ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн район администрацийĕн 2012 çулхи мартăн 1-мĕшĕнчи 186 № йышăнăвĕпе Ильич яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн уй-хир бригадин пуçлăхне **Михаил Гельмасович ИВАНОВА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăлану.

**«Ачалăх ячĕпе, ачалăхшăн»**

## Марафон вăй илет

Республикăра «Ачалăх ячĕпе, ачалăхшăн» ыр кăмăллăх марафонĕ вăй илсе пырать. Марафона «Раççейри ача-пăча фончĕ» обществăлла организацин республикăри уйрăмĕн пуçарăвĕпе ирттереççĕ. Чăваш Енри ыр кăмăллăх юхăмне республика Пуçлăхĕ М. Игнатьев ертсе пырать.

Çак эрне пуçламăшĕ тĕлне марафонăн пухмачри укçа-тенкĕ сумми 144 пин тенкĕрен иртнĕччĕ. Унта укçа хывнă уйрăм çынсенчен пĕри – Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин комитет председателĕн çумĕ К. Косачев. Çак ырă тĕслĕхе курса пирĕн район çыннисем те ырă ĕçе хăйсен тӳпине хывасса, апла пулсан ачасен пурнăçне савăнăçлăрах та телейлĕрех тума хутшăнасса шанатпăр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Райадминистрацире

## Хисеп грамотипе наградăланă

Нумай çул хушши тăрşса ĕçленĕшĕн тата общественноçра ĕçсене активлă хутшăннăшăн район администрацийĕн 2012 çулхи февралĕн 14-мĕшĕнчи 157 № йышăнăвĕпе Ярапайкассинчи ял тăрăхĕнчи Сыпайри ялти библиотека заведующине **Татьяна Владимировна ВАСИЛЬЕВĂНА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Вăрçă ачисем

# Пурнăç йывăрлăхĕ çапса хуçайман

Туçи Олкаш ялĕнче пурăнакан Зинаида Федоровна Кольцова нумаях пулмасть хăйĕн çуралнă кунне паллă турĕ. Вăл 81 çул тултарчĕ.

«Эпĕ 1931 çулта Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Уплер ялĕнче çуралнă, – каласа парать Зина аппа. – Мĕн кăна курман пулĕ эпĕ çакăн чухлĕ пурăнса». Чăннипех те Зинаида Федоровнăн пурнăçĕ, уйрăмах ачалăхĕ, çăмăл килмен.

Çемьере вĕсен ултă ача пулнă: виçĕ ывăл тата виçĕ хĕр. Зинаидăн мĕн ачаранах хресчен ĕçне кӳлĕнме тивнĕ. Вăл вунă çулта чухне хаяр вăрçă пуçланать. Икĕ пиччĕшне Иванпа Василие тата ашшĕне вăрçă пуçлансанах фронта илсе каяççĕ. Тепĕр аппăшĕ Мария хăй ирĕкĕпе фронта каять, Сталинград хулине хӳтĕленĕ çĕрте çапăçать. Аслă аппăшне Ольгăна Сосновкăри торф кăларакан предприятие ĕçлеме илсе каяççĕ.

Килте вара Зинаидăн кĕçĕн шăллĕпе тăрса юлма лекет. Мĕншĕн тесен вĕсен амăшне те окопсем чавма илсе каяççĕ. «Мĕн тери йывăрччĕ: шкулне те каймалла, выльăх-чĕрлĕхне те пăхмалла, кăмакине те хутмалла...», – ассăн сывлать ватă çын. Кунсăр пуçне шăллĕне те пăхмалла пулнă. Шухăшлатăн та тĕлĕнетĕн: çавăн чухлĕ йывăрлăха епле майпа тӳссе чăтма пултарнă-ха 11 çулхи хĕр ача? Кунсăр пуçне çимелли те нимех те пулман вĕт-ха?

Ун чухне патшалăха аш-какай та памалла пулнă. Вĕсен çемйи çак парăма вăхăтра парса татман тесе килте икĕ ача кăна пулнине пăхмасăрах сарайне кĕрсе сурăх илсе тухса кайнине халĕ те пăшăрханса аса илет вăл.

Вăрçă çулĕсенче ку ярăнсенче кашкăрсем уйрăмах йышланса кайнă. Пĕррехинче Зина кĕтӳ кĕтнĕ вăхăтра ĕнесем çине кашкăрсем тапăнаççĕ. Ачасем кашкăрсене хăваласа яраççĕ. Анчах та çамрăк хĕр ача хăранипе 2–3 кунлăх калаçайми пулать.

Зина 7-мĕш класра вĕреннĕ чухне вăрçă чарăнать. Ашшĕ фронтран сурансем тавранать, икĕ çула яхăн кăна пурăнать. Пиччĕшĕсемпе аппăшĕ те таван киле тавранаççĕ.

Çитĕннĕ май 14 çула çитсен хăйне пĕр ялти хĕр тантăшĕпе пĕрле Атăл тăрăх пăрахутпа Самара облаçне кăшман кăларма илсе кайнине питĕ хумханса каласа парать Зинаида. «Кĕрхи кунта кунĕпе ĕçлетеретчĕç, çиме вара пĕр татăк çăкăрпа хĕрлĕ кăшман кăна паратчĕç», – тет вăл.

1947 çулта çил-тăвăл алхаснине пула Йăлăм вăрманĕнче самай пысăк лаптăк çинче йывăçсем ӳксе пĕтнĕ пулнă. Вăра каллех çул çитмен çамрăксене ирĕксĕрлесех вăрман ĕçне ĕçлеме илсе каяççĕ.

Вырăна çитсен ытла çамрăккине кура вĕсене каялла киле кайма хушаççĕ. Вăрмана машинăпа илсе кайнă пулнă. Каялла тавраннă чухне вара хĕр ачасем çухалса çӳресе аран-аран килĕсене таврăнаççĕ.

Тата пĕррехинче тăхăнма тумтир тавраш пулманнипе тантăш юлташ хĕрĕпе Сĕнтĕрвăррине пĕрер михĕ çĕр улми сутма кайма тухаççĕ. Вăрманпа пынă чухне лаши темрен шикленсе чарăнать. Пăхаççĕ те – умра кашкăр лара парать. Юрать-ха çав самантра ку вырăна пĕр арçын пырса тухать, хĕрсене инкекрен хăтарать.

Çĕр улми сутнă укçапа хĕрсем тутăр çĕлеме симĕс тĕслĕ пир туянаççĕ. «Çав тутăра çыхса тухсан пирĕнтен кăвакалсем тесе кулма пуçларĕç, – каласа парать Зина аппа. – Кăвакал аçин пуçĕ симĕс вĕт-ха».

Çапла нушаланса пурăнса 16 çула çитсен вăл тантăш хĕрĕпе пĕрле Сĕнтĕрвăрринчи çăкăр заводĕнче ĕçлеме тытăнать. Вунă çула яхăн тăрăшать кунта вăл. Çав вăхăтрах кунта вĕренме пынă Валериан Кольцовпа паллашать. Вара иккĕшĕ 1957 çулта пĕр çемье çавăрса яланлăхах пурăнма Туçи Олкаш ялне куçса килеççĕ.

Зинаида Федоровна колхозра ĕçлеме тытăнать. Малтан сурăх ферминче, кайран вăкăрсем самăртнă çĕрте вăй хурать вăл. Кирек мĕнле ĕçре пулсан та хăйне шанса панă ĕçе пĕтĕм чунне парса, тăрăшса пурнăçласа пырать. Çакна шута илсе ăна кĕçех ял Совет депутатне суйлаççĕ, колхозра уй-хир бригадине ертсе пыма шанаççĕ. Нумай çул хушши тăрăшать вăл ку ĕçре. Тивĕçлĕ канăва вара Зинаида Федоровна Мăн Сĕнтĕрти çăкăр заводĕнче ĕçлесе тухать.

Мăшăрĕпе вĕсем икĕ ача çуратса пăхса ӳстерсе пурнăç çулĕ çине кăларнă. 2007 çулта вĕсем патĕнче ял-йыш ветерансен ылтăн туйне паллă тунăччĕ. Шел пулин те, мăшăрĕ паянхи куна пурăнса çитеймерĕ.

Зина аппан вара паян икĕ мăнук тата 4 кĕçĕн мăнук. Юратаççĕ ватă çынна ачисем те, кĕрĕвĕпе кинĕ те. Паянхи кун та вăл ĕççĕр ларайманть. Ялан пахчара е выльăх-чĕрлĕх патĕнче. Ял-йыш та хисеплет ăна. Мĕнле хисеплемĕн-ха çакăн пек сăпайлă, ĕçчен, ырă кăмăллă ватă çынна.

Ун çине пăхатăн та тĕлĕнетĕн. Мĕн кăна курман пулĕ, мĕн кăна чăтса иртермен пулĕ вăл хăйĕн ĕмĕрĕнче? Апла пулин те нимĕнле йывăрлăх та ăна çапса хуçайман. «Ĕçрен ан хăра кăна, вара этем тени яланах вырăнлă», – тет Зина аппа.

**П. ВОРОБЬЕВ.**
Мăн Сĕнтĕр ялĕ.

# Утмăл ултă çул çума-çумăн

Юбилей



Ахальтен каламаççĕ хĕрарăм пурнăç тыткăчи тесе. Пирĕн ытарлă хĕрарăмсем юнашар пулсан ачапăча, мăшăр пит-куçĕнче йăл кулă палăрать, кил вучахĕ те хĕмленсе тăрать. Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен уявĕ çитнĕ май Уйкас Хачăк ялĕнчи Мария Степановнăпа Михаил Степанович Осиповсен çирĕп çемйи пирки çырмасан килĕшӳллех те мар пулĕ. Кирек ăçти пекех вĕсен кил-çуртĕнчи хăтлăх тата килĕшӳлĕх ытларах хĕрарăмранах килет. Вĕсен хуçалăхне пырса кĕрсенех чи малтан куçа тирпейлĕх тыткăнлать, йĕритавра ешерекен чечексем илĕртеççĕ, кашни япала хăй вырăнĕнче упранни – ахăртнех кунта яш çулхи çынсем пурăнаççĕ тейĕн.

Çемье вучахне упракан ăш пиллĕ хĕрарăм 90 çула çывхарать. Туррăх чăтăмлăх панă пулĕ ырă кăмăллă Мария Степановнăна, çынна ырă туни ырăпах таврăнать теççĕ те халăхра. Анчах шел, унăн кун-çулĕ питĕ йывăр килнĕ, мĕн ачаллах ашшĕ-амăш тимлĕхĕсĕр ӳсме тивнĕ ăна. Çавна май пĕтĕм терт-нуша черченкĕ хул пуççи çине тиеннĕ. Вăрçă çулĕсенче арçын ĕçне йăлтах ĕçленĕ, окоп чавнă тата ытти йывăр ĕç пурнăçланă – пур пĕр чăтнă. Çакăн пек пултаруллă çынсем пĕрле кар тăнипех пулĕ çĕнтерӳ çывхарнă та. Вăрçă нушине чăтса иртерсен тепĕр çултан Мария тата Михаил пĕр çемье чăмăртаççĕ, ĕмĕр вĕçне тухиччен пĕр-пĕрне килĕштерсе пурăнма сăмах пăраççĕ. Унтанпа 66 çул çитрĕ ĕнтĕ, вĕсем вара яш чухнехи пекех çур сăмахран ăнланаççĕ, шăкăл-шăкăл каласса пурăнаççĕ – çакăнтан ырри мĕн пултăр ĕнтĕ çутă тĕнчере.

Осиповсем – ĕçпе пиçĕхнĕ хисеплĕ çынсем. Вĕсем тăватă ача ӳстерсе пурнăç çулĕ çине кăларăççĕ. Ачисем пĕринчен тепри маттур, ĕçчен те правур. Вĕсенчен кашниех ашшĕ-амăшĕн ырă енне илнĕ.

Çемье пуçĕ 1922 çулта çуралнăскер хăй мăшăрĕ пекех мĕн ачаллах ашшĕ-амăшĕсĕр юлнă. Ӳссе çитсен вара Аслă Отечественнăй вăрçа хутшăннă. Тăшман пульли Михаил Степановича тăватă хутчен суранлатнă. Смоленск патĕнчи çапăçура вара вăл вилĕмпе çума-çумăн пулнă, йывăр аманнă. Çавна май Орехово-Зуево госпиталĕнче çур çула яхăн сывалнă. Çапах та хăюллă та паттăр салтак йывăр суррансене парăнтарса Берлина çитме пултарнă.

– Эпир ачасенчен сивĕ сăмах илтмен. Вĕсем тимлĕх уйăрман пулсан вара çак вăрăм ĕмĕре эпир пурăнайман та пулăттăмăр. Çавăн пекех паянхи çителĕклĕ пурнăçшăн çĕршыв ертӳçисене тав тăвас килет. Эпир курнă йывăрлăха урăх никам та ан куртăрччĕ, – терĕç хисеплĕ çынсем пĕр-пĕрин çине кăмăллăн пăхса.

Осиповсен çулĕсем сахал мар пулин те питĕ маттур çынсем, кирек кампа та ялан тараватн. Ваттипе ваталла, çамрăккипе çамрăкла пулма пĕлеççĕ. Вĕсен çемйи – пуриншĕн те ырă тĕслĕх. Эпир пысăк хисепе тивĕç çынсем патне тăтăш тĕрлĕ уявсенче саламлама çитсе килетпĕр.

Осиповсен çемйи ырă тĕслĕх пулнăран вĕсем çинчен пухнă материала район комиссине тăратнă, хисеплĕ çынсем чăннипех те «Юратупа шанчăклăхшăн» медаль илме тивĕç тесе шутлатпăр эпир. Сăлтавпа усă курса эпĕ уйрăмах Мария Степановнăна тата ытти хĕрарăмсене çуркуннехи пĕрремĕш уявпа чунтан тухакан ăшă сăмахса саламлатăп, çирĕп сывлăх та килĕшӳ сунатăп.

**Г. ГОЛУБЕВА,**
**Москакасси ял тăрăхĕнчи хĕрарăмсен канашĕн ертӳçи.**

# Телейлĕ пурнăç юрри хăйĕншĕн те шăрантăр

Ĕлĕкрех чăвашра çапла йăла пулнă. Çĕн пӳрт ĕçки-и, мăнкун-и – ун чухне хăна-вĕрле сасси эрнене тăсăлатчĕ. Ĕçлеме те, канма та пĕлетчĕ ун чухнех чăваш халăхĕ. Çавăн пек тăвансем пĕрле пуçтараннă чух пĕчĕк Фаина ытти вĕтĕршакăрсемпе кăмака хыçĕнчен ăмсанса пăхатчĕ купăс калакан пиччесем çине. Лешсем «сывлăш çавăрса» яма тесе пăрăнсан кăмака хыçĕнчен сиксе тухатчĕ, купăс тӳмисем çине пусса илетчĕ, унтан каялла кăмака хыçне кĕрсе таратчĕ. Мĕн пĕчĕкрен купăс калама ĕмĕтленнĕ хĕр ача каярахпа хăй тĕрлĕ уявсенче, сцена çинче хăй кăмăл туличчен купăс каласа çынсене савăнтарасса шутламан та пулĕ. Паян вара Муркашра пурăнакан Ф.А. Григорьева купăс тăсса ярсан чăваш юрри-ташшине юратакан пĕр çын та çакна пăхса савăнмасăр тăма пултараймасть. Фаина Алексеевна юрă шăрантарнине пĕрре илтнĕ çын ун сассине тек никам сассипе те арпаштармасть. Çапла хăйĕн пултарулăхĕпе хăй сисмесĕрех чăваш халăх культурине сыхласа хăварас ĕçе хутшăннă Фаина Алексеевна. Февралĕн 23-мĕшĕнче хăйĕн юбилейне паллă тунă Фаина Алексеевна.

Шаптак Муркашра çуралса ӳснĕ чăваш хĕрĕ паян çапла хăйĕн пултарулăхĕпе халăха савăнтарса пĕрре хăйĕн ĕмĕтне пурнăçа кĕртрĕ, тепре – амăшĕн пехилĕ ахаль пулмарĕ. Хăйĕн йăмăкĕпе аппăшĕ купăспа çав тери хитре каланăран амăшĕ Анастасия Максимовна 6 ачине çапла калатчĕ:

–Хăшĕ те пулин купăспа калама вĕренĕр-ха.

Хăй вара çав тери хитре юрлатчĕ. Мăшăрĕ те купăс калама юрататчĕ çав. Астăватăп-ха Фаина Алексеевна ашшĕ хăйне купăс илсе панине. Малтан ыттисенчен вăрттăн мунчана питĕрĕнсе ларса нăрттаттаратчĕ купăса 6 класра вĕренекен хĕр ача. Çапла пĕр кĕвĕ хыççăн теприне кăларма пуçларĕ. Хăйне илемлĕ кĕвĕ тĕнчине илсе кĕнĕшĕн ашшĕне амăшне, çавăн пекех тăванĕсене Женя Мокшановна Женя Макарова та тав тăвать Ф.А. Григорьева. Паян вара Муркаш райповĕнче закройщицăра ĕçлекен Ф.А. Григорьева райпон 9 çул каялла йĕркеленнĕ «Сăлкуç» ансамбльне те юратсах çӳрет. Хăйне унта юрлама тӳр килнишĕн вара Муркаш райпо канашĕн ертӳçине Б.В. Андреева чĕререн тав тăвать. Муркашри искусство шкулĕн преподавателĕнче ĕçлекен хăйĕн йăмăкĕпе Л.А. Яковлевăпа пĕрле клипсем те хатĕрлерĕ. Вĕсем юрлакан юрăсен дискне те юратса итлеççĕ республикăн тĕрлĕ кĕтесĕсенче. Юррисене илемлетекенĕ вара – Валерий Ильдяков. Фаина Алексеевна калакан такмаксен дискне ярсан вара урай хăми авăнса тăмалла саккăрла çаптарса ташласа ярас килет. Юрраташша юрлакан 6 пĕр тăван пуçтарăнсан хăйсем пĕр уяв туса параççĕ.

Чуна йывăр чух та, чĕре савнăçпа тулнă чух та Фаина Алексеевна юрăран уйрăлмасть. Хăй сцена çине тухнине вара нихăçан та сăмса каçăртса çӳремест.

– Купăспа манран хитре калакансем те пур, – тет вăл. Шаптак Муркашра пурăнакан Владимир Сергеева асăнать вăл ун пек чухне.

Астăватăп-ха, хам ача чухне пирĕн ялта та Фаина Алексеевна пек купăс ăста калакан хĕр пурччĕ. «Купăс калакан хĕр телейлĕ пулмасть»,– тетчĕç ялта ун пирки. Аякри яла качча кайрĕ. Телейлĕ-и вăл е çук – калама пултараймастăп. Фаина Алексеевна вара хăйне пĕрре те телейсĕр тесе шутламасть. Мăшăрĕ те ăнланатчĕ Фаинăн юррăкĕвве юратакан чунне. Шел, вăхăтсăр çĕре кĕчĕ.

Ывăлĕ Алексей вара амăш юрлакан юрăсене хаклакансенчен пĕри пулса тăратчĕ. Шкулта чухнех гитарăпа хитре калатчĕ. Мускаври кооператив институтĕн Шупашкар-



ти филиалĕнче юрист профессине илнĕ хыççăн Мускаври фирмăра ĕçлет халĕ.

Хĕрĕ Света та (шкулта вĕренет) амăшĕнни пек янравлă сассипе куракансене тыткăна илме ĕлкĕрчĕ. Шупашкарта иртекен «Мехел» конкурса пĕрре мар хутшăнчĕ, хăйĕн пултарулăхĕпе савăнтарчĕ.

Ирпе ĕçе васкать Фаина Алексеевна. Чун туртать юратнă ĕçе. Каçхине вара киле васкать: хĕр ачи кĕтет унта амăшне. Ывăлĕ Мускавран шăнкăравласа ярать те чунчĕре лăш! каять. Тав Турра, пурте йĕркеллĕ ачасен. Çакă телей мар-и вара? «Телейлĕ пурнăç юрри пуриншĕн те янрамасть», – тесе юрлать Фаина Алексеевна хăйĕн репертуарне кĕртнĕ юрăсенчен пĕринче. Фаина Алексеевнăшăн вăл янанах янратăр. Хăй те çынсен чунне хăпартлантаракан юрăсене пĕрин хыççăн теприне шăрантартăр. Юбилей каçĕнче пуçтараннă пек тăвансем, тус-юлташсем яланах çумра пулччăр. Кун-çулĕ телейлĕ те вăрăм пултăр.

**Л. ПАВЛОВА.**

# Чĕрене тыткăнлакансем

Культура

Нумаях пулмасть вĕçленнĕ «Чечеклен, юратнă Муркаш ен» смотр-конкурсра районти кашни художество пултарулăх коллективĕ хăйĕн шайне кăтартса пачĕ. Чи малтанах пурте тăрăшуллă та пуçарулă пулнине палăртмалла.

Вăçкассинчи Культура çуртĕнче йĕркеленнĕ коллектив пирки уйрăммăн калас килет. Маттурсем! Илемлĕ юрă-ташăна куракан чĕри патне чăнах та çитерме пултараканскерсем. Унсăр вĕсен концертне курма пуçтарăннă халăх пĕрле юрламĕччĕ те, пĕрле савăнмĕччĕ те. «Кĕçĕр вăйлă çумăр çунă», «Вăрманта, çырлара» – çак илемлĕ юрăсемпе пуçланакан концерт программи вĕçне çитиччен тыткăнран вĕçертмест.

Коллективра ытларах ку тăрăхри хастар хĕрарăмсем: Татьяна Степанова, Алиса Иванова, Рената Павлова, Валентина Ипатьева, Елена Иванова, Алина Павлова, Римма Кириллова, Августина Степанова, Людмила Михайлова, Вера Егорова, Зоя Антонова, Светлана Максимова (илемлĕх ертÿçи). Хуçи мĕнле – коллектив çапла: концерта йĕркелесе ертсе пыракане, илемлĕ юрăсем шăрантаракансенчен пĕри – Культура çурчĕн директорĕ Наталия Ильина. Çак хастар пикен ăсталăхĕ, пуçарулăхĕ, вăй-хăвачĕ пурин çине те куçнă тейĕн. Чăнкă чăваш «баб-кисем» тата мĕне тăрççĕ. Уйкас Янасалти пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕнче вăй хуракан



Ирина Ивановăпа Зинаида Смородинова çынсене «тăраниччех» култараççĕ.

Пикесем вара каччăсемсĕр мар. Николай Иванов, Олег Максимов, Анатолий Никифоров, Валерий Степанов тата Леонид Степанов (баянпа калакан) пултарулăх ушкăнне хăт кĕртеççĕ. Вĕсемпе пĕрлех Сосновкăри тĕп шкулти 9 класра вĕренекенсем те ташăсемпе савăнтараççĕ. Ольга Павлова акă Муркашри вăтам шкулта вĕренет пулсан та кашни репетицинех çитнĕ. Тăван ырăн тăван ырăнах çав вăл.

Çак пултарулă коллектив нумаях пулмасть районти вылăхчĕрлĕх пăхакансен кунĕнче те хăйĕн пултарулăхĕпе паллаштарчĕ. Район пуласлăхĕшĕн ырми-канми тăрăшакансене уяв парнелерĕ. Çав кунах Вăçкассисем Йÿçкассинчи ватă çынсемпе инвалидсен çуртĕнче концертпа пулчĕç. Унта та вĕсене хапăлласа йышăнчĕç. Темиçе çĕре пĕр кунта мĕнле ĕлкĕртĕр-ха тесе кăсăклансан Н. Ильина ак мĕнле хуравларĕ: «Спонсорсене тав тăватпăр, вĕсем пулмасан йывăртарах пулĕччĕ. Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăх ертÿçи И. Николаев тата пирĕн тăрăхри Л. Яковлев предприниматель питĕ пысăк пулăшу кÿчĕç: вăй-хал пухма тутлă вĕри яшка та çитерчĕç, çул çÿрев те тÿлевсĕрех пулчĕ».

Çак концерта курманнисен вара питех салхулланма кирлĕ мар: Муркашри Хĕл ăсатăвĕн уявне çитсе курма тăрăшăр – унта та Вăçкассисем сцена çине тухса халăха савăнтарĕç.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Тĕл пулу

# Ветерансем канашларĕç

Ялта пурăнакансен куллен татса памалли ыйтусем сахал мар. Экономика пĕлтерĕшлĕ-и вĕсем е социаллă ыйтусене хускатаççĕ – кашнинех вăхăтра татса панине хăйсен ĕмĕрне ĕçре ирттернĕ ветерансем чăтăмсăр кĕтеççĕ.

Иртнĕ кунсенче Орининти Культура çуртĕнче ку тăрăхри ветерансен канашĕпе ял тăрăхĕн администрацийĕ вăрçăпа ĕç ветеранĕсем валли тĕрлĕ шайри пуçлăхсемпе тата специалистсемпе тĕл пулу ирттерчĕç. Тĕл пулăва аслă çулсенчи 100 ытла ветеран кăмăлласа хутшăнчĕ. Хăнана килнисем хушшинче ЧР сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министрĕн çумĕ Н. Осипова, районти социаллă хÿтлĕх пайĕн тата социаллă пулăшу центрĕн ертÿçисем Н. Петровăпа О. Иванова, районти ветерансен канашĕн председателĕ М. Виноградова, «Оринино» хуçалăх ертÿçин çумĕ А. Прокопьев, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ тата Оринин вăтам шкул директорĕ В. Иванов, участокри врач-терапевт И. Данилова, ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А. Волков т.ыт. те.

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ иртнĕ çулхи ĕçсене тишкерсе паян пурнăçлаканнисемпе паллаштарнă хыççăн ветерансем хăйсене хумхантаракан ыйтусене килнĕ хăнасем патне тÿрремĕн тухса вырăнтах тивĕçлĕ хуравсем илчĕç.

Тĕл пулура ЧР сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министрĕн çумĕ Н. Осипова «Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» ят илнисене савăнăçлă лару-тăрура удостоверенисем пачĕ. Вĕсене çак ветерансем тивĕçрĕç: А. Алексеева (Оринин), И. Бычкова (Мулкачкасси), Е. Михайлова (Мулкачкасси), З. Просова (Терес), М. Савельева (Чамăш), Е. Шишокина (Терес).

Савăнăçлă кас Орининти информаципе культура центрĕ çумĕнчи ветерансен хорĕн концерчĕпе вĕçленчĕ.

**С. МИХАЙЛОВА,**
**ял тăрăхĕн эксперт специалисчĕ.**

Ырă шухăш-ĕмĕтлисем

# Тăватă çулта – пĕр çуралнă кун



«Сан çуралнă кун, çуралнă кун – акă ĕнтĕ çитрĕ кĕтнĕ кун», – шăранать радиопа е телеэфиртa эпир пурсăмăр та юратнă юрă. Çуралнă кун чи савăк вăхăт, эпир хамăр пурнăçри ку таранччен пурнăçланă ĕçсемпе малашлăх ĕмĕтсене пĕтĕмлетмелли-уçăмлатмалли кун.

Нарăс уйăхĕн 29-мĕшĕнче çуралнисем пирĕн хушăмăрта сахал, анчах вĕсем пурри пирки те манмастпăр. Вĕсем пирĕн пиччесемпе шăллăмсемех, аппасемпе йăмăксемех. Эпир çуллен хамăр çуралнă куна паллă тăватпăр пулсан, вĕсен вара çак савăк кун 4 çулта пĕрре килет. Çавăнпа та Муркашри тĕп больницăра эндокринолог пулса ĕçлекен Татьяна Шарикова **(сăн ÿкерчĕкре Ираида Анатольевна хыçĕнче)** патне тÿрех çакăн пек ыйтупа пытăм:

– Аннÿн çуралнă кунĕ 4 çулта пĕрре килет. Мĕнле йышăнатăн эсĕ ăна тата ытти çулсенче хăш вăхăтра аннÿне çуралнă кунпа саламлатăр?

– Çак кун календарь çинче çук çулсенче нарăс уйăхĕн 28-мĕшĕ пуш уйăхĕн 1-мĕшне куçнă тĕлти пĕчĕкçĕ самантпа пулсан та аннене эпир çуллен саламланă, – терĕ Таня амăшĕ çумĕнче хăйне шанчăклă туйнине палăртса.

Таня амăшĕ – Çатракасси ял тăрăхĕнчи Хуракасси выççăлккинче хресчен çемйинче çуралса ÿснĕ Ираида Анатольевна Казакова. Ашшĕ – Анатолий Михайлович Хлебников – хăй вăхăтĕнче «Свобода» хуçалăхри чи опытлă шофер пулнă. Амăшĕ – Фекла Николаевна – нумай çул суту-илÿре ĕçленĕскер паян хăйĕн кил хуçалăхĕнчи ĕçсемпе ватлăх çулĕсене ирттерет.

– Кашмаш шкулне вĕренме кайсан (1967 ç) тепĕр çулне хамăр класра манăн çуралнă куна паллă туни халĕ те асран каймасть. Паян вара икĕ хĕрĕмпе, ывăлăмпа пĕрле кĕрÿсем манăн çуралнă куна кĕтни уйрăмах савăнтарать, – каласа парать Ираида Анатольевна. 4 çулти пĕр çуралнă кунĕнче мăшăрĕн (Муркашри тĕп больницăн шăл технникĕн Сергей Николаевич Казаковăн) саламĕ ыттисенчен уйрăлса тăнине те палăртать хĕрарăм.

Ираида Анатольевнăн сывлăх хуралĕнче ĕçлес шухăш ачаллах çуралнă. Ăна пурнăçа кĕртме хĕр Кашмашри пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан шкул хыççăнах Шупашкарти медицина училищинче вĕренме кĕнĕ. Унтан вĕренсе тухнăранпа кăçалхи утă уйăхĕнче 34 çул пулать. «Вăхăт иртнине сиссе те юлмарăм», – сăпайлăн калаçать медсестра. Çак хушăра пирĕн ентеш Муркашри врач участокĕн аслă категорилĕ медсестрине ÿссе çитни те вăл пурнăçра тĕрĕс çул суйласа илнине çирĕплетет кăна.

Нарăсăн 29-мĕшĕнче И. Казакова çывăх çыннисемпе, юлташĕ-тăванĕсемпе хăйĕн 4 çулта пĕрре уявлама май пур çуралнă кунне паллă турĕ. «Тăватă хут çамрăкрах эсĕ пирĕнтен», – йăл кулса парнесем тыттарчĕç ырă сунакансем.

Ăнăçу пултăр сире, Ираида Анатольевна! Паян вара сире Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ ячĕпе саламлатпăр. Çулсем иртни ан сисĕнтĕр, çамрăклăх ытларах упранса вăй-хăват парса тăтăр. Ан манăр, эсир те район историйĕн уйрăлми пайĕ.

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ÿкерчĕкĕ.**

Районадминистрацире

# Хисеп грамотипе наградăланă

***Район администрацийĕн 2012 çулхи февралĕн 20-мĕшĕнчи 173 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

1. Çынсен ыйтăвĕсене тивĕçтерессин сферинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн – **Фаина Алексеевна ГРИГОРЬЕВĂНА**, Муркаш райповĕн çĕвĕ цехĕн закройщицине.

2. Çитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парас ĕçре тунă çитĕнÿсемшĕн тата нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн – **Юрий Сергеевич КОПЕЕВА**, «Ильинкăри пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан вăтам шкул» муниципаллă бюджет вĕрентÿ учрежденийĕн физкультура учительне.

«Золушка» ача сачĕ 25 çул тултарчĕ

# Чун ăшшине парнелеççĕ

Орининти «Золушка» ача сачĕ питĕ илемлĕ вырăнта вырнаçнă. Йĕри-тавра хурăнсем, чăрăшсем, пилешсем ÿсеççĕ, садик территорине илем кÿреççĕ. Садикра вара ырă чунлă та ăшă кăмăллă ĕçченсем вăй хураççĕ. Ачасен шкулччениx воспитанийĕпе вĕрентĕвĕшĕн ырми-канми тăрăшаççĕ.

Ашшĕ-амăшĕ хăйĕн пепкине çултаłăк çурă тултарсанах ача садне ярать, çапла сисмесĕрех садикра ача 7 çул та тултарать. Ача садĕнче шăпăрлансем кунĕпех «ĕçре». Ку вăхăтра вара ашшĕ-амăшĕ те хăйсен ĕç вырăнĕнче лăпкă.

Мĕн кăна вĕренмеççĕ пуль вĕсем, мĕн кăна пĕлмеççĕ пуль? Садикри кун ирхи апатран пуçланать те ун хыççăн тĕрĕ занятисем, уçă сывлăшри спорт тата хускану вăййисем, кăнтăрлахи апатлану, залри вăйăсем... «Золушкăна» çÿрекенсен тата ритмика кружокĕ те пур. С. Каликов ертсе пыракан занятисене эрнере икĕ кун пухăнаççĕ ачасем.

Воспитательсем чăваш культурине хисепленĕрен ачасем те чăвашсен ырă йăли-йĕркисене, ташшиюррисене ăша хывса ÿсеççĕ. Çавна май «Люби и знай свой родной край», «Любовь к музыке» конкурссене тăтăшах хутшăнаççĕ. Районта иртекен «Малышиада», «Умники и умницы» конкурссенче те малти вырăнсене йышăнма тăрăшаççĕ. Кану вăхăтне те кунта яланах усăллă ирттереççĕ, çак ĕçе ашшĕ-амăшне явăçтараççĕ.

Хăçан пуçланса кайнăха «Золушка» ача сачĕ?

1985 çулта 140 вырăнлăх ача сачĕн никĕсне хывнă. Çавăнпа пĕрлех Оринин шкулĕнчен вĕренсе тухнă виçĕ вĕренекене – О. Шишокинăна, Н. Грачевăна, В. Филипповăна – Шупашкарти педагогика училищине вĕренме кайма направлени панă.

Çирĕм пилĕк çул каялла мартăн 7-мĕшĕнче «За коммунизм» колхоза ача сачĕ усăлăнне паллă тунă. Унта 38 çын ĕçлеме тытăннă. Коллектива М. Воробьева ертсе пынă. Малтанхи çулсенче 6 ушкăна 154 ача çÿренĕ, ушкăнсенче 30–35 ача та пулнă. Чĕрĕк ĕмĕр хушшинче вара кунтан 500-е яхăн ача шкула кайма хатĕрленсе тухнă. Садик питĕ ăнăçлă ĕçленĕ. Ăнсăртран мар ĕнтĕ 199 çулта кунта 27 регионтан пухăннă делегаци килсе курнă.

Паянхи кун ачасем виçĕ ушкăна çÿреççĕ. Вĕсем кашниех хăйне май пултарулă. Воспитательсен коллективĕ те питĕ тăрăшуллă, хастар.

Садика уçнăранпа кунта пĕр улшăнмасăр ĕçлекенсем те чылай: М. Воробьева, Н. Иванова, С. Карасева, Л. Порфирьева, В. Репина – 1 категорилле воспитательсем, О. Ершова, А. Налимова, И. Угольникова кĕçĕн воспитательсем тата В. Сорокина техслужащи. Ачасен сывлăхне К. Майорова тĕрĕслесе тăрать, С. Вершковăпа С. Иванова тутлă апат пĕçерсе çитереççĕ, В. Иванов юрра-ташша хăнăхтарать. Ирпе килнĕ çĕре садик ачасене чипер кĕтсе илтĕр тесе Л. Ермаков тата В. Ершова хуралçăсем тăрăшаççĕ. Мĕн те пулин çĕмĕрĕлсен вара Ю. Скворцов çийĕнчех юсаса парать.

Хальхи вăхăтра садик ертÿçинче çамрăк та пултарулă Л. Федотова тăрăшать. Орининта çуралса ÿснĕскер ку тăрăхри лару-тăрăва та, кунти ачасен ашшĕ-амăшĕсене те лайăх пĕлет. Хисеплеççĕ ăна ялйышра, унăн пархатарлă ĕçĕшĕн тав тăваççĕ.

Садик ĕçченĕсемпе кунта çÿресе воспитани илекен çамрăк ăрăва таса сывлăх, телей сунатпăр. Кунсерен тĕрекленсе, ÿссе пымалла пултăр!

**Н. ИВАНОВА,**
**М. ВОРОБЬЕВА,**
**Л. ПОРФИРЬЕВА,**
**С. КАРАСЕВА**
**воспитательсем.**

# Юрий Федотов ячĕпе – вуннăмĕш хут

**Ентеше асăнса**



«Вунă çул каялла та çакăн пек хĕвеллĕ çанталăк пулнăччĕ, – аса илчĕ «Интурист – Чебоксары» чикĕллĕ яваплăхлă общество ертӳçи В. Федотов. – Ун чухне пĕрремĕш хут Юрий Федотов ячĕпе ирттернĕ ăмăрту район шайĕнче кăна пулнă, 21 команда пухăннăччĕ. Паян вара ăмăрту республика шайĕнче иртет. Командисем те чылай – 60. Ертӳçĕсен чупăвне 17-ĕн хутшăнма кăмăл турĕç».

Малтанхине кăшт аса илнинчен пуçланчĕ шăмат кун, мартăн 3-мĕшĕнче, Калайкассинче иртнĕ пысăк ăмăрту.

Пирĕн ентеше Юрий Федотова сума суса унăн юлташĕсем, ăна çывăх пĕлекенсем тата республикăри вунă хулапа районти спортсменсем Калайкассине пухăнчĕç. Сыпайра çуралса ӳснĕ Чăваш Ен чемпионĕ ячĕпе ăмăрту пуçарса ярасси шăпах унăн чи çывăх юлташĕсен шухăшĕ пулнă. Пуçарăва Муркаш район администрацийĕ ырласа пулăшу панă. Çапла 2003 çултанпа кашни çулах пысăк ăмăрту иртет. Унăн пĕлтерĕшĕ чакманни, хутшăнакан командăсен йышĕ пысăкланни вара, паллах, савăнтарть.



Ăмăртăвăн яланхи тĕп спонсорĕсем – Ю. Федотовăн чи çывăх çыннисем – пиччĕшĕсемпе аппăшĕ. Валерий Иванович «Интурист – Чебоксары» чикĕллĕ яваплăхлă общество ертӳçи, Михаил Иванович «Чувашия» фонд ертӳçи, Александр Иванович – «Чувашская топливная компания» акционерсен уçă обществин генеральнăй директорĕ, Муркашсен Шупашкарти ентешлĕхне ертсе пырать, Владимир Иванович – Шупашкар элеваторĕн тĕп инженерĕ, Любовь Ивановна социаллă страховани фончĕн регионти уйрăмĕнче тăрăшать. Пурăннă пулсан Юрий Федотов та республика пурнăçĕнче пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнатчĕ пулĕ...

Калайкассине чылай сумлă хăна пухăнни ăмăрту сумлăхне тепĕр хут çирĕплетрĕ: Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ В. Антонов, И. Ульянов ячĕллĕ ЧПУ проректорĕ О. Викторов, Сĕн-тĕрвăрри район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Моисеев, Шуршăл шкулĕн директорĕ Л. Михайлова, «Хресчен сасси» хаçатăн тĕп редакторĕ С. Павлов тата ыттисем спортсменсене саламларĕç. Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев та кашнинех ăмăртура çĕнтерме ăнăçусем сунчĕ.

Малтанах старта ертӳçĕсем тухрĕç. Хĕрарăмсенчен чи маттуррисем Елена Савельева (И. Ульянов ячĕллĕ ЧПУ), Елена Федотова (Шупашкар хула стоматологи поликлиникин уйрăмĕн ертӳçи) тата Надежда Владимирова (Канаш хули) пулчĕç. Çăмăллăн, хавас кăмăлпа çитрĕç вĕсем пĕрин хыççăн тепри финиша. Арçынсем те дистанци вĕçне çил пек хăвăрт тухрĕç: Владимир Перепелкин (Красноармейски районĕн тĕп больници), Сергей Тасаков (И. Ульянов ячĕллĕ ЧПУ) тата Александр Богданов («Алико» страхлакан компани) çĕнтерӳçĕсен картлашкисене йышăнчĕç.

Шкул ачисен вăтам ӳсĕмĕнче команда чылай пулнăран икĕ чупу йĕркелерĕç. Кунта Канаш хулинчен килнĕ хăнасене çитекенни пулмарĕ. Хыççăнхи вырăнсене Калайкассинчи тата Муркашри вăтам шкулсен командисем йышăнчĕç. Аслă классенче вĕренекенсем хушшинче трасса хуçисем – Калайккасси шкулĕнче вĕренекенсем (пĕрремĕш команди) – çĕнтерчĕç. Элĕкри 1 № вăтам шкул команди – иккĕмĕш вырăнта, Калайкасси шкулĕн иккĕмĕш команди – виççĕмĕш вырăнта.

Учительсен командисем старта тухсан пирĕнтен нумайăшĕ Çатракассинчи вăтам шкул командишĕн пулчĕ. Мĕншĕн тесен вĕсем медальсемшĕн тупăшма пултарни палăрчĕ. Кĕтни вара ума килчĕ: Çатракассисем иккĕмĕш вырăна тухса медальсене кăна мар, укçан премие те тивĕçрĕç. Вĕсем Йĕпреçри учительсен командине хыçа хăварчĕç, ЧПУ команди вара çĕнтерӳçĕ пулса тăчĕ.

Çĕнтерӳçĕ командăсем куçса çӳрекен кубоксене тивĕçрĕç. Ентешлĕхĕн кубокĕ пур пĕтĕмлетӳ хыççăн Калайкасси шкулĕн командине лекрĕ. Кашни призера медальсемпе дипломсем тата хаклă парнесем парса чысларĕç.

Сыпайри тĕп шкулта вĕренекенсен (Ю. Федотов унта вĕреннĕрен) тата Ильинкăри вăтам шкулта вĕренекенсен командисене депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ В. Кожанов ятарлă парнесем парса хавхалантарчĕ.

Ăмăртăва хутшăннă кашни спортсмена (вĕсем 300-е яхăн пулчĕç), хăнана вĕри апатпа хăналарĕç. Апат тӳлевсĕр çитерни пĕчĕкрех ăмăртусенче те çук. Сăмах май Федотовсем районта спорт аталантăр тесе чылай тăрăшаççĕ. Акă Калайкассинчи вăтам шкула декабрьте кăна 4 мăшăр йĕлтĕр парнелерĕç. Кунта йĕлтĕр трассине хатĕрлеме май паракан «Буран» та – вĕсен пулăшăвĕ.

Ăмăрту кунĕнче куракансене Калайкассисем концерт программипе те савăнтарчĕç. Çакăн пек пысăк спорт уявĕ çитес çул та чылай спортсмена пĕрле пухасса шанас килет. Ентешсене манмалла мар.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенчи отчетпа суйлав пухăвĕсем**

# Ӳсĕмрен чакмаççех Шурчасем

Черетлĕ ял хуçалăх çулĕн виççĕмĕш уйăхне кĕнĕ май çĕр ĕçченĕ унччен хи çулталăка пĕтĕмлетет, мĕн тунине тишкерсе малашлăх планĕсене уçăмлатать. Пĕр вырăнта тапăртатса тăрса паха вăхăта сая ярассинчен хăтăлма тăрăшакан хресченĕн шухăшĕпе ĕмĕчĕ тата пурнăçĕ çапла çыхăнса пырать вăл.

Районта пуринчен малтан çак ответлă ĕçе кăçал Шурчасем туса ирттерчĕç. «Çăмăл пултăринччĕ «Герой» хуçалăх алли», – выляса илчĕ пуçра шухăш асатте-асаннесен каларăшне никĕсе хурса. Маларах хуçалăх ертӳçине Р. Тимофеева район администрацийĕн пуçлăхĕ пулма уйăрса лартнăран Шурчасен кăçал отчетлă пухупа пĕрлех суйлав ыйтăвне те татса памалла пулчĕ.

Иртнĕ çулхи ĕçсене тишкерсе хак пама тĕп доклада хуçалăхăн тĕп бухгалтерĕ Г. Иванова туса пачĕ. Хăйсен отрасль ĕçĕсемпе хуçалăхăн тĕп агрономĕ З. Макарова, хăрушсăрлăх техникин инженерĕ И. Михайлов т. ыт. те каласа кăтартрĕç. Отчетпа суйлав пухăвне хутшăнса район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев та сăмах063 каларĕ, хуçалăхăн малашлăхĕ пуррине, çавна валли ăна çирĕп алăна шанса памаллине палăртрĕ.

– Сирĕнпе нумай çул шăкăл-шăкăл ĕçлерĕмĕр. Пĕлтĕрхи ĕç те куç умĕнчех. Виçĕм çулхи шăрăха пăхмасăрах выльăхсен ама кĕтĕвне упраса хăвартăмăр. Паян сирĕн алă усма сăлтав çук. Умра – çур аки. Хуçалăх ĕçченĕсен паянхи тĕп тĕллевĕ кооператив ертӳçине суйласа çурхи ака-сухана тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илесси пулмалла. Эсир çакна ответлăха туйса тума пултарасса шанатăп, – терĕ хăйĕн сăмахĕнче Ростислав Николаевич.

Пĕлтĕрхи çанталăк условийĕсем çĕр ĕçченне кĕрхи ĕçсене çухатусемсĕр ирттерме май памарĕç пулин те, паянхи ĕçе ырана хăварманнисене лачакана та путармарĕç. Çанталăк условийĕсене пăхмасăрах уй-хир ĕçĕсене вăхăтра пурнăçлакансем хушшинче «Герой» хуçалăх та пулчĕ. Шурчасемпе Шуркассисем пĕлтĕр 500 ытла гектар çинче ӳстернĕ тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсенчен гектар пуçне ампар виçипе вăтамран 27,4 центнер пухса илсе кĕлете кĕртсе хучĕç. Ку вăл виçĕм çулхинчен самай нумайрах.

Ĕне сĕчĕ чĕлхи çинче тени выльăхран продукци ытларах илесси апат тата унăн пахалăхĕ çине çулталăкĕпех пысăк тимлĕх уйăрма кирли çинчен калать. Калаçăва хутшăнакансем çакăн çинче чарăнса тăни те хуçалăх ĕçченĕсем малалла пăхни, аталанмалли çĕнĕ çулсем шырани пирки пĕлтерет.

Çĕнĕ çулсем тенине хисепсем çине куçарсан çакă куç умне тухать. Виçĕм çул пĕтĕмĕшле продукци туса илсе 18 миллион та 764 пин тенкĕ укçа ĕçлесе илнĕ пулсан, «Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕ пĕлтĕр çак кăтартăва палăрмаллах ӳстернĕ. Çулталăк хушшинче Шурчасемпе Шуркассисем 21 миллион ытла тенкĕлĕх продукци илме хевте çитернĕ.

– Ял хуçалăх çулне тупăшлă вĕçлени пирĕн ĕç потенциалĕсем пуррине çирĕплетет. Пирĕн вĕсемпе туллинрех усă курмалла кăна,– тесе вĕçлерĕ хăйĕн отчетлă сăмахне З. Макарова тĕп агроном.

Умри тĕллевсене лайăх курса тăни кунта паянхи пулăм мар. Иртнĕ çул та «Герой» хуçалăх çак картран чакман. Специалистсемпе ĕçченсем ĕç кăна аталану çулне уçса пынине ăнланни, малашлăх ĕмĕтсемпе пурăнни кăçал пĕлтĕрхинчен тухăçлăрах ĕçлессе шантарать.

Пуху ирттерме кун йĕркине кĕларнă нумай ыйтусен шутĕнче Шурчасемпе Шуркассисем иртнĕ çулхи отчетлă пухура тунă йышăнусене епле пурнăçланине те пăхса тухрĕç. Йышăнусем вара хут çинче çеç юлман. Мĕн пурнăçлани çĕннине ыйтать. Акă хуçалăх кăçал çĕнĕ сеялка, «хир карапĕ», трактор туянас ĕмĕтлĕ. Çаксем вĕсем – хуçалăхри ĕçсене ресурс перекетлемелли технологи çине куçармалли тĕллевĕн пуçламăш утăмĕсем.

Отчетлă тапхăрта «Герой» хуçалăх правленийĕ аталану никĕсĕ çинче ĕçлесе пынă хушăра ĕçлекен халăха ĕç укçи тӳлессине яланах малти ретре тытса пынă. Унăн уйăхри вăтам виçи хуçалăхĕпе 7 пин тенкĕне яхăн.

Пĕтĕм ĕçе критикăлла пăхса тухса хуçалăх ĕçченĕсем уставпа килĕшӳллĕн хуçалăх ертӳçине, правлени канашне, сăнав канашне суйласа хăварчĕç. Пухăва пынисем пĕр саслă пулса хуçалăх тилхепине 26 çулхи Андрей Арсентьевич Михайлова шанса пачĕç. Кунпа пĕрлех пуху правлени членĕсене, сăнав канашĕнче ĕçлекенсене суйласа хăварчĕ. Кооператив ĕçченĕсем хăйсен иртнĕ çулхи ĕçне вăтам хак парса çитес çул валли ĕçпе финанс планне те çирĕплетрĕç.

**А. БЕЛОВ.**

# Быков кубокĕшĕн

**Спорт уявне чĕнетпĕр**

Çатракасси ял тăрăхĕнче Мухтав орденĕн тулли кавалерне А. Быкова халалласа çулсерен ирттерекен ял çыннисен спартакиади кăçал Çатракассинчи вăтам шкулта мартăн 10-мĕшĕнче иртет. Спорт уявне ял хуçалăх предприятийĕсен, учрежденисемпе ял тăрăхĕсен командисене чĕнетпĕр. Хутшăнакансем 18 çулта е аслăрах пулмалла.

Программăра: йĕлтĕр эстафети (2 арçын, 2 хĕрарăм), волейбол (3 арçын, 3 хĕрарăм), шашкăлла вылясси (1 арçын, 1 хĕрарăм), шахматла вылясси (1 арçын, 1 хĕрарăм), сĕтел çи теннис (1 арçын, 1 хĕрарăм), кире пуканне çĕклесси (1 представитель).

Çĕнтерӳçĕсем дипломсемпе парнесене тивĕçеççĕ. Спортăн уйрăм енĕсенче палăрнă командăсемпе участниксем те дипломсемпе парнесене тивĕç пулĕç. Балсем тан пулсан волейбол вылянипĕлтерĕшлĕрех пулать.

**Йĕркелӳ комитечĕ.**

# Хыçра – иртнĕ çул, умра – çур аки

Çулталăка хыçа хăварнă май кирек епле организаци те ку таранччен пурнăçланă ĕçе тишкерет, хак парать, ума тĕллев лартать. Çак кунсенче Ильич ячĕпе хисеплекен хуçалăхра çулталăк пĕтĕмлетĕвĕн пухăвĕ иртрĕ. Палăртма кăмăллă, 2011 çулхи районти экономика ăмăртăвĕнче асăннă хуçалăх малтисен шутĕнче пулма тивĕçрĕ. Апла пулсан хуçалăх ĕçĕ курăмлă пулни куç кĕрет.

Чи малтанах пухăннисем умĕнче район пуçлăхĕ – депутатсен районти Пухăвĕн председателĕ, Ильич яч. хис. хуçалăх ертӳçи Игорь Николаев иртнĕ çулхи ĕç-хĕл çинче чарăнса тăчĕ. Хуçалăх 2011 çулта тĕрлĕ продукци сутса 25 миллион та 369 пин тенкĕ тупăш тунă, ку кăтарту малтанхи çулхипе танлаштарсан 2 процент чухлĕ ӳснĕ. Таса тупăш илесси 5 миллион та 157 пин тенкĕлĕх пулнă. Тĕрлĕ çăл куçран уйăрнă пулăшу шайĕ 6 миллион та 505 пин тенкĕпе танлашнă. Хуçалăх умĕнчи тĕрлĕ организаци парăмĕн калăпăшĕ 1854 пин тенкĕ, çав хушăрах хăйсем те ыттисем умĕнче парăмсăрах мар. Ильич яч. хис. хуçалăх ĕçченĕсене ĕç укçи тӳлеме 7 миллион та 915 пин тенкĕ тăкакланă, пĕр уйăхри вăтам ĕç укçи калăпăшĕ 6 пин те 596 тенкĕпе танлашнă.

Кирек епле производствăра та çĕнĕ технологипе анлă усă курни тупăш калăпăшне ӳстерме тата тăкак шайне пĕчĕклетме май парать. Хуçалăх çавна тĕпе хурса уй-хир ĕçĕнче, выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче тата ыттинче çĕнĕлле ĕçлеме тăрăшать. Çавăн пекех техникăпа пурлăхăн пĕтĕмĕшле базине тĕпрен çĕнетнĕ. Акă «Беларусь-892» трактор, ытти агрегат туяннă.

Хуçалăх иртнĕ çул уй-хир ĕçĕсене 1560 гектар çинче пурнăçланă. Тĕш тырă сутса 3 миллион та 520 пин тенкĕ тупăш илнĕ. Унăн тухăç шайĕ районти чи пысăккисенчен пĕри пулнă. Çакăн çине пысăк пахалăхлă вăрлăхпа тата çĕнĕ технологие тĕпе хурса ĕçлени ырă витĕм кӳнĕ. Кунта тырă аласа тата типĕтсе янтăламалли комплекс хута яни хуçалăхшăн пысăк тĕкĕ тата пысăк пахалăх çăл куçĕ пулни аван курăнать. Çĕнĕ объект витĕр 1800 тонна тĕш тырă тирпейленсе тухнă.

Выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче 55 çын вăй хурать. Хуçалăхри măйракаллă шултра выльăх шучĕ 748 пуç, сумалли ĕне хисепĕ 244 пуçпа танлашать. Пĕтĕмпе 1106 тонна сĕт туса илнĕ, пĕр ĕне пуçне тивекен сăвăм – 4 пин те 533 килограмм. Сысна шучĕ 610 пуçпа танлашать, вĕсенчен 842 çура илнĕ е малтанхи çулхинчен 17 процент ытларах, çав хушăрах пăру илесси чакнă. Сысна ăратне çĕнетес тĕллевпе Суворов яч. хис. хуçалăхран хушма выльăх кӳрсе килнĕ. Хуçалăх выльăх-чĕрлĕх продукцийĕнчен пĕтĕмпе 20 миллион та 362 пин тенкĕ тунă. Хуçалăхăн кашни ферминче вăхăтран вăхăта юсав ĕçĕсем ирттереççĕ.

– Куратăр ĕнтĕ, вăй çитнĕ таран ĕçлеме тăрăшатпăр, анчах та хуçалăх аталанăвĕнче ура хуракан кăлтăк та сахал мар. Çавăнпа та пирĕн татах та ытларах ĕçлемелле, хуçалăх пурлăхне перекетлеме вĕренмелле. Харпăр хăй хуçалăхĕнчи пек тăрăшса ĕçлемелле, – терĕ Игорь Васильевич умри ответлă тапхăра – çур акине хатĕрленме вăхăт çитнине палăртса.

Пуху ĕçне пĕтĕмлетнĕ май хуçалăх ертӳçи И. Николаев ĕçре уйрăмах палăрнисене ятран ырăпа асăнса тав сăмахĕ каларĕ.

Пухăва хутшăннă район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, ял хуçалăх пайĕн ертӳçи В. Калинин район экономикин аталанăвĕпе паллаштарчĕ, Ильич яч. хис. хуçалăх ĕç-хĕлне ытти хуçалăхсемпе танлаштарчĕ. Палăртма кăмăллă, асăннă хуçалăх хăш-пĕр хуçалăхсемшĕн ырă тĕслĕх вырăнĕнче, çав хушăрах вĕсен те ыттисенчен тĕслĕх илмелли çук мар.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

# Телепрограмма

**с 12 по 18 марта 2012 года**

## ПОНЕДЕЛЬНИК, 12.03

### ПЕРВЫЙ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.35, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.20 Контрольная закупка
9.50 «Жить здорово!»
10.55 Модный приговор
12.20, 4.05 «Криминальные хроники»
12.55 «Право на защиту»
14.00 Другие новости
14.20 Понять. Простить
15.15 Т/с «ОБРУЧАЛЬНОЕ КОЛЬЦО»
17.00 Т/с «СЕРДЦЕ МАРИИ»
18.50 «Давай поженимся!»
19.55 «Пусть говорят»
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ЛИЧНЫЕ ОБСТОЯТЕЛЬСТВА»
22.30 Х/ф «КРАТКИЙ КУРС СЧАСТЛИВОЙ ЖИЗНИ»
23.35 «Познер»
0.55 «Городские пижоны». «Белый воротничок»
1.40, 3.05 Х/ф «ПОЧТИ ЗНАМЕНИТ»

### РТР

5.00 Утро России
9.05 «С новым домом!»
10.00 «О самом главном»
11.00, 14.00, 16.00, 20.00 Вести
11.50 Т/с «ХОЗЯЙКА МОЕЙ СУДЬБЫ»
12.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ»
14.50 Вести. Дежурная часть
15.05 Т/с «ЕФРОСИНЬЯ. ПРОДОЛЖЕНИЕ»
16.50 Т/с «КРОВИНУШКА»
17.55 «Брачное агентство Николая Баскова»
18.55 «Прямой эфир»
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ДЫШИ СО МНОЙ. СЧАСТЬЕ ВЗАЙМЫ»
23.50 «Анжелика Балабанова. Русская жена для Муссолини»
0.50 Вести +
1.10 «Профилактика»
2.20 Т/с «ДЕВУШКА-СПЛЕТНИЦА-3»

### ЧУВАШИЯ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
11.30-11.50 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
16.30-16.50 Вести-Чăваш ен
20.30-20.50 Вести-Чувашия
**На канале «Россия-2»**
9.10-9.15 Вести-Спорт-Чувашия

### КУЛЬТУРА

7.00 «Евроньюс»
10.00 «Наблюдатель»
11.15, 1.40 Т/с «ПЕРРИ МЭЙСОН»
12.10 «Высшая ценность - человек»
12.40 «Линия жизни»
13.35 Д/с «Красота книг». «Средневековые шедевры»
14.05 Телеспектакль «БУМАЖНОЕ СЕРДЦЕ»
15.40, 19.30, 23.30 Новости культуры
15.50 М/ф «Хвосты»
16.05 Д/с «Дневник большой кошки»
17.05 «Монолог в 4-х частях». Часть первая.
17.35 Знаменитые ансамбли. «Виртуозы Москвы»
18.40 Д/ф «Гилберт Кит Честертон»
18.50 «В вашем доме»
19.45 Главная роль
20.00 «Сати. Нескучная классика...»
20.40 «Мой серебряный шар»
21.30 Жизнь замечательных идей. «Овечка Долли - чудо или чудовище».
21.55 Academia
22.40 «Тем временем»
23.50 Д/ф «Профессия - киновед, или «Архивное кино» в эпоху третьего информационного взрыва»
0.30 Д/ф «Хлебный день»
1.25 Г. Свиридов. Кантата «Ночные облака»
2.35 Й. Гайдн. Концерт для 4-х солирующих инструментов с оркестром

### НТВ

5.55 «НТВ утром»
8.30 Т/с «ЛИТЕЙНЫЙ, 4»
9.30, 15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 «Внимание, розыск!»
10.55 «До суда»
12.00 Суд присяжных
13.30 Т/с «ХВОСТ»
16.25 «Прокурорская проверка»
17.40 «Говорим и показываем»
19.30 Т/с «ЛЕСНИК»
21.25 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ-5»
23.15 Сегодня. Итоги
23.35 Честный понедельник
0.25 «Школа злословия». Александр Марков
1.10 Главная дорога
1.45 Центр помощи «Анастасия»
2.35 «В зоне особого риска»
3.10 Т/с «ХОЛМ ОДНОГО ДЕРЕВА»
4.55 Т/с «ПРЕСТУПЛЕНИЕ БУДЕТ РАСКРЫТО»

## ВТОРНИК, 13.03

### ПЕРВЫЙ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 23.35, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.20 Контрольная закупка
9.50 «Жить здорово!»
10.55 Модный приговор
12.20 «Криминальные хроники»
12.55 «Право на защиту»
14.00 Другие новости
14.20 Понять. Простить
15.15 Т/с «ОБРУЧАЛЬНОЕ КОЛЬЦО»
17.00 Т/с «СЕРДЦЕ МАРИИ»
18.50 «Давай поженимся!»
19.55 «Пусть говорят»
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ЛИЧНЫЕ ОБСТОЯТЕЛЬСТВА»
22.30 Х/ф «КРАТКИЙ КУРС СЧАСТЛИВОЙ ЖИЗНИ»
0.00 «Городские пижоны». «Следствие по телу»
0.55, 3.05 Х/ф «АПОЛЛО 13»
3.35 «Чудеса исцеления»

### РТР

5.00 Утро России
9.05 «С новым домом!»
10.00 «О самом главном»
11.00, 14.00, 16.00, 20.00 Вести
11.50 Т/с «ХОЗЯЙКА МОЕЙ СУДЬБЫ»
12.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ»
14.50 Вести. Дежурная часть
15.05 Т/с «ЕФРОСИНЬЯ. ПРОДОЛЖЕНИЕ»
16.50 Т/с «КРОВИНУШКА»
17.55 «Брачное агентство Николая Баскова»
18.55 «Прямой эфир»
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ДЫШИ СО МНОЙ. СЧАСТЬЕ ВЗАЙМЫ»
22.55 К юбилею. «Наина»
23.50 «Охота на призраков»
0.50 Вести +
1.10 «Профилактика»
2.20 «Честный детектив»
